25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
ОКТЯБРЬ
22
КĔÇНЕРНИКУН
247 (6182) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хуласем валли çĕрулмипе пахча-çимĕçсем çителĕклĕ хатĕрлер

Пирĕн республикăри колхозсем, пĕтĕм Совет Союзĕнчи колхозсем пекех, çĕршывпа фронта мĕн кирлине пурне те туса парас ĕмĕтпе ĕçлесе, кăçалхи ял-хуçалăх çулĕнче вăйлă тухăçлă çĕрулми, купăста, хăяр, сухан, кăшман т. ыт. те пуçтарса илчĕç. Кăçал туса илнĕ пахча-çимĕç, çĕрулми пирĕн юратнă Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот валли çеç мар, хуласенчи рабочисемпе служащисем валли те çителĕклĕ.

Анчах пахча-çимĕçсене ана-йăрансем çинчен вăхăтра пуçтарса илесси — çур ĕç, унсăр пуçне тата вĕсене хамăрăн хуласем, район центрĕсем, ача яслисем, больницăсем валли çителĕклĕ таран хатĕрлес пулать, кирлĕ çĕре турттарса пырса, хĕл каçарма типтерлесе хурас пулать. Çак питех те кирлĕ ĕçе — хула çыннисен апат-çимĕç запасне тăвас ĕçе — пирĕн хатĕрлев тата суту-илӳ организацийĕсен: Чăвашторгăн, леспродторгăн, потребсоюзăн, промсоюзăн, коопинсоюзăн, пахча-çимĕç трестĕн, столовăйсен трестĕн тата ыттисен те туса пымалла. Промышленность предприятийĕсенчи рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем валли предприятисем çумĕнчи ОРС-сем (рабочисене снабжени парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсем) хатĕрлеме тивĕçлĕ.

Анчах пирĕн республикăри хатĕрлев тата суту-илӳ организацийĕсем хăйсен çак ответлă задачине кирлĕ пек пурнăçа кĕртсе пымаççĕ-ха. Кăçалхи çул çĕрулмипе пахча-çимĕçсене хатĕрлеме уйрăмах лайăх условисем пулчĕç пулин те, уполнаркомзаг, суту-илӳпе хатĕрлев организацийĕсем тата предприятисенчи рабочисене снабжени парса тăракан отделсем çав условисемпе вăхăтра усă курмарĕç; вĕсен районсенчи хăшпĕр аппарачĕсем ку тĕлĕшпе нимĕн те тумасăр, ответлăха туймасăр ларчĕç. Çавна пула тата ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсем тăтăшах тĕрĕслесе тăман пирки республикăра децентрализованнăй йĕркепе çĕрулми тата пахча-çимĕçсем хатĕрлес ĕç пачах та çителĕксĕр пырать. Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тунă сводка тăрăх, республикăра хатĕрлев планне çĕрулми енĕпе 27,6 процент, пахча-çимĕçсем енĕпе 28,6 процент çеç тултарнă.

Уйрăмах ку тĕлĕшпе пахча-çимĕç трестĕ (управляющийĕ Белянкин юлташ), Хусан чугунçулĕн Улатăрти райтрансторгпитчĕ (начальникĕ Гарпуша юлташ), промсоюз (правлени председателĕ Воротилов юлташ) тата промышленность предприятийĕсем çумĕнчи ОРС-сем ытла та начар ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте çĕрулми хатĕрлес плана 10—20 процентран ытла тултарман, купăста, хăяр, сухан, кишĕр тата кăшман хатĕрлес енĕпе ĕçе тин кăна тытăннă.

Хулари ĕççыннисем тата пĕрлешӳллĕ столовăйсем валли апат-çимĕç хатĕрлес ĕçе Чăвашторгпа Шупашкарти столовăйсен трестĕ те начар организацилернĕ. Децентрализованнăй хатĕрлевсен 1942 çулти планне октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне Чăваштогр çĕрулми енĕпе 21,8 процент, пахча-çимĕçсем енĕпе 31,3 процент, столовăйсен трестĕ 50—34 процент çеç тултарнă. Апла пулин те вĕсен ертсе пыракан работникĕсем: Чăваштогр директорĕ Масленников юлташ, столовăйсен трестĕн управляющийĕ Герасин юлташ ĕçе вăйлатас тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман, халĕ те нимĕнех те тумаççĕ. Çавна пула пĕрлешӳллĕ апатланун хăшпĕр предприятийĕсен хĕл вăхăчĕ валли мар, халĕ апат хатĕрлеме те çĕрулмипе пахча-çимĕçсен запасĕ çителĕксĕр.

Отечественнăй вăрçăн иккĕмĕш хĕлĕнче ытлăн-çитлĕн пурăнма тата тухăçлă ĕçлеме ĕççыннисене кирлĕ апат-çимĕç запасне хатĕрлес ĕç республикăра малашне те çакăн пек сӳрĕккĕн пынине тӳсме çук. Государствăн çак пысăк ĕçне халех тивĕçлипе организацилесе вăйлатас пулать, хатĕрлев ĕçĕсен планне Октябрь уявĕ тĕлне пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех тултармалла тăвассишĕн кĕрешес пулать. Ăна пурнăçа кĕртесси — суту-илӳпе хатĕрлев организацийĕсен паянхи чи пысăк задачи, тата çавăншăн вĕсем çĕршыв умĕнче ответлă пулса тăраççĕ.

Анчах ĕççыннисене пахча-çимĕç тĕлĕшпе ытлăн-çитлĕн хĕл каçарасси хатĕрлев планне тултарнипех вĕçленмест, унсăр пуçне тата хатĕрленĕ пахча-çимĕçе кирлĕ çĕре вăхăтра турттарса хурас пулать, вăхăтра тăварласа е типĕтсе хурас пулать, лайăх пăхса хĕл каçарас пулать. Ку ĕçе вара республикăра пуçăннă кăна темелле, анчах унта та пысăк чăрмавсем пур. Чăваштогр, потребсоюз, древпромсоюз тата ыттисен промышленность халăх комиссариачĕ пахча-çимĕçсене тăварламалли савăтсапасене, катка-пичкесене кирлĕ чухлĕ тата срокра юсаса, çĕнĕрен туса парайман. Çакна пула хатĕрленĕ пек пахча-çимĕçсене тăварласа хĕл каçарма лартасси кая юлса пырать. Пахча-çимĕçсене тăварласа лартмалли каткапичкесем çитменни тата тытса усрамалли складсем, нӳхрепсем юсавлă марри Шупашкарта анчах мар, Улатăрта, Канашра тата ытти хуласенче те палăрать. Çавна курса тăнă çĕртех Чăваштогрăн унти отделенийĕсенчи ертсе пыракан работниксем пахча-çимĕçсене лайăх тытса усрамалла тăвас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ.

Апат-çимĕçсен çителĕклĕ запасне хатĕрлес ĕçре суту-илӳпе хатĕрлев организацийĕсене парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем те тăтăшах пулăшса тăма тивĕçлĕ. Вĕсен суту-илӳ организацийĕсем колхозсемпе тунă договорсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслесе тăмалла, хатĕрленĕ пахча-çимĕçсене тăварламалли, тытса усрамалли пунктсем патне турттарса тухма транспорт тата ĕç вăйĕ уйăрса памалла, катка-пичкесене, складсене хăвăртрах юсаса çитерме пулăшмалла.

Хуласенчи тата районсенчи партипе совет организацийĕсен, пахча-çимĕç хатĕрлес тата ăна пăхса усрамалла тăвас ыйту çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Ку тĕлĕшпе вĕсен çитес вăхăтра хатĕрлев работникĕсен, ялсовет, колхоз председателĕсен канашлăвĕсене ирттерме те юрать. Вăл канашлусенче колхозсем суту-илӳ организацийĕсемпе тунă договорсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тухас пулать. Вырăнти парти, комсомол организацийĕсен хуласем валли децентрализованнăй йĕркепе çĕрулми, пахча-çимĕç хатĕрлес ыйту тавра колхозниксемпе единоличниксем хушшинче массăллă-ăнлантарулă ĕçе сарса ямалла, хальхи вăхăтра çак ĕç мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен вĕсене ăнлантарса памалла.

Вăрçă йывăрлăхĕсем пирĕн умма типтерлĕх, перекетлĕх ыйтăвне нихăçанхинчен çивĕччĕн кăларса тăратрĕç. Пахча-çимĕçсене хатĕрленĕ, вĕсене пăхса усранă çĕрте те типтерлĕ те перекетлĕ пулас пулать. Пĕр продукт та, пĕр çĕрулми те усăсăр ан пĕттĕр, мĕн хатĕрлени пĕтĕмпех потребительсем патне çиттĕр. Пахча-çимĕçсене тăккалани, сиенлени, çĕртни,— çĕршыв умĕнче айăпа кĕни пулать. Пахча-çимĕçсене пăхса усрассишĕн суту-илӳ организацийĕсемпе вырăнти советсем государство умĕнче ответ тытаççĕ.

Пирĕн ĕççыннисен апат-çимĕç базине вăйлатса пымалли майсем татах та пур. Вăрмансем халĕ çиме юрăхлă кăмпасемпе пуян. Суту-илӳпе хатĕрлев работникĕсен кăмпа пухса типĕтсе, тăварласа хатĕрлессине организацилемелле. Кунта харпăрхăй ĕçне юратни, пултарулă та пуçарулă пулни, хаклă вăхăтпа усă курни çеç кирлĕ — вара ĕççыннисен апат-çимĕç базине çителĕклех хатĕрлеме пулать.

Танксен „Тракторист Чувашии“ ятлă колоннине тума 1000-шер тенкĕ параççĕ

КУСЛАВККА, октябрĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Машинно-тракторнăй станцин трактористĕсемпе комбайнерĕсем Елчĕк районĕнчи трактористсен чĕнĕвне пысăк хавхаланупа сӳтсе-яваççĕ. МТС-ра пулса иртнĕ пухура трактористсем, комбайнерсем тата служащисем пурте танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума пĕр уйăх ĕç укçине пама пулчĕç.

Тракторист Жолобов юлташ Елчĕк районĕнчи трактористсен пуçарăвне ырласа çапла каларĕ:

— Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче тăван çĕршывра нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçакан Хĕрлĕ Çара пулăшассинчен хисеплĕ те чыслăрах ĕç маншăн урăх çук. Эпĕ танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума пин тенкĕ укçа паратăп,—терĕ вăл.

Жолобов юлташ сăмахĕ — МТС коллективĕн шухăш-кăмăлĕ. Тракторист Гибадуллин юлташ танксен колоннине тума 1000 тенкĕ, Антоновпа Васильев трактористсем 800-шер тенкĕ, Зайцевпа Афанасьева юлташсем 500-шер тенкĕ пачĕç. Танксен колоннине тума укçа пухас ĕç малалла пырать.

А. ШАРКОВ.

* * *

Тăвай МТС коллективĕ, Елчĕк МТС коллективĕ танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тăвасси çинчен чĕнсе каланине тулли кăмăлпа ырласа, çав танксене тума 35 пин тенкĕ пухса пама пулчĕ. Фронта вăйлăн пулăшса тăшмана çĕнтерес тĕлĕшпе хавхаланнă трактористсем хăйсен укçа-тенкисене танксен колоннине тума параççĕ. Акă Александр Баданов тракторист 500 тенкĕ, Ксения Егорова 500 тенкĕ, Анна Чернова 300 тенкĕ, Серафима Ефимова 200 тенкĕ, Перасковья Воробьева 400 тенкĕ, Илья Петров 500 тенкĕлĕх сырăнса укçисене çийĕнчех тӳлерĕç. МТС-ри малта пыракан 4-мĕш бригадăри трактористсем танксен колоннине тума укçа парас ĕçре те малта пынине кăтартса пачĕç. Ку бригадăри кашни трактористах 500 тенкĕ пама пулчĕç, 12-мĕш бригадăри трактористсем те 3.000 тенкĕ параççĕ.

В. ЧЕРНОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 20-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 20-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Октябрĕн 19-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци нимĕçсен 4 танкне, войскăсем лартнă 10 автомашинине пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине пусарса лартнă, пĕр сторожевой карапа путарнă тата противникăн пĕр ротăна яхăн пехотине салатса янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталингад районĕнче пирĕн войскăсем оборонăра тăрса хаяррăн çапăçнă. Противникăн пĕр полк пехоти тата 40 танкĕ рабочи поселок районĕнчи пирĕн опорнăй пунктсене атакăланă. Пирĕн чаçсем нимĕçсен атакине сирсе пăрахнă, нимĕçсене малтанхи позицийĕсем çине хăваласа янă. Противник, тата 30 танк илсе пырса, тепĕр хут наступлени пуçласа янă. Гитлеровецсем танксемпе чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем туснĕ, анчах та нимĕнле çитĕçӳ те тăвайман. Каç пулнă çĕре çапăçусем малтанхи рубежсенчех пынă. Пĕр заводăн районĕнче пирĕн войскăсем противникăн пур атакисене те сирсе пăрахнă. Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем каланă тăрăх, юлашки кунсенчи наступленисене хутшăннă нимĕç дивизийĕсем хăйсен йышĕнчен 70 процентне çухатнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем йышăнса тăракан рубежсене çирĕплетнĕ тата уйрăм участоксенче вырăнти çапăçусем туса пынă. Молочевский командир пулса ертсе пыракан подразделенин боецĕсем пăшалпа, пулеметпа тата минометпа персе, румын салтакĕсемпе офицерĕсене икĕ ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, виçĕ пулемет пĕтерсе тăкнă тата противникăн 2 миномет батарейине пусарса лартнă. Н-ски чаçăн зенитчикĕсем нимĕçсен икĕ самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн подразделенисем противникпа çапăçнă. Çĕрле халăх пурăнакан пĕр пункта тытса илнĕ хыççăн гитлеровецсене малалла хĕссе пынă, вĕсене пĕр рубежран хăваласа янă. Çав участокри çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 900 çынна çити вĕлерсе тăкнă. Противникран продовольствипе обмундировани складне, çавăн пекех тата тĕрлĕрен хĕçпăшал тытса илнĕ.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тивĕç пехотин Гордеев юлташ ертсе пыракан подразделенийĕсем противникăн атакине сирсе ярса, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна çити вĕлернĕ. Тепĕр участокра румынсен роти кĕçĕн командирĕн Степановăн отделонине атакăланă. Пирĕн боецсем, пăшалпа тата пулеметпа персе, румынсене сапаласа янă. Пирĕн боецсен Щеткин лейтенант ертсе пыракан ушкăнĕ тăшманăн тылĕнче кĕрешсе, çар грузĕсем турттарса пыракан 10 лава пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 40 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Орел облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ икĕ эрне хушшинче противникăн тăватă çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 4 паровоз, боеприпассем тиенĕ 18 вагон, горючи тултарнă 2 цистерна тата артиллери тиенĕ 4 платформа пĕтнĕ. Унсăр пуçне, тĕрлĕрен çар грузĕсем тиенĕ 73 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

Партизансен тепĕр отрячĕ нимĕç захватчикĕсемпе çапăçса 600 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ тата 18 автомашина пĕтерсе тăкнă. Çав отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ, нимĕç железнодорожникĕсене улталаса, хăюллă операци туса илнĕ. Пĕр разъездра партизансем хурала вĕлернĕ те чугунçул стрелкине куçарса лартнă, нимĕçсен чугунçулпа пыракан пĕр эшелонне çав линипе пыракан тепĕр эшелонне хирĕç янă. Пĕрпĕрне пырса çапăнса, тĕрлĕрен хĕçпăшал тиенĕ 42 вагон çĕмĕрелнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем вырăссен авалхи хулине Новгорода пĕтĕмпех ишĕлтерсе пĕтернĕ. Хулан центрти урамĕсене пĕтĕмпех çĕрпе тан тăвса хунă. Гитлеровецсем шкулсемпе театрсене, больницăсемпе библиотекăсене тата ытти культурăллă учрежденисене кăна мар, аваллăхăн чи паха памятникĕсене те сирпĕнтерсе е çунтарса янă. Фашистла громилăсем Новгородри авалхи Кремле пĕтĕмпех ишсе пĕтерсе чул купине туса хунă, вырăс зодчествин памятникне—Софийски собора сирпĕнтерсе янă тата историпе культура енчен калама çук хаклă япаласем пулса тăракан ытти сооруженисене те ишсе сирпĕнтерсе янă. Ишсе антарнă сӳртсен кирпĕчĕсемпе нимĕç захватчикĕсем çар укрепленийĕсем тунă çĕрте усă кураççĕ. Хулара халь совет çыннисем çук. Вĕсене пурне те урăх çĕре куçарнă е ирĕксĕрле ĕçе янă.

* * *

Греци халăхĕ нимĕç тата Итали оккупанчĕсене хаяррăн хирĕç тăрать. Агринион ятлă кӳлĕ районĕнче хĕçпăшалланнă хресченсем итальянецсен гарнизонне тапăннă, вĕсем 29 оккупанта вĕлернĕ хыççăн тусем хушшине кайнă. Италин карательнăй отрячĕ вăл таврари ялсенче 400 заложнике ытла арестленĕ. Греци патриочĕсем арестленисен лагерьне тапăннă та, лагерĕн хуралне вĕлерсе,—заложниксене ирĕке кăларнă.

Октябрĕн 21-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем, противникăн темиçе атакине сирсе ярса, ăна хăйĕн малтанхи рубежĕсем патне хăваласа янă. Çав çапăçура нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Гварди красноармеецĕ Краснопольский юлташ 30 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, сержант Сергиенко юлташ автоматпа персе 44 нимĕç салтакне вĕлернĕ. Гвардеец-минометчиксем сасартăк вăйлăн пере-пере ярса нимĕçсен 2 танкне çунтарса янă, артиллерин 3 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн разведчикĕсем противникăн çирĕплетнĕ 6 точкине сирпĕнтерсе янă, пĕр орудине, 3 пулеметне пĕтерсе тăкнă тата 100 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксен групи противник тăракан вырăна кĕрсе кайнă та горючи складне вут тĕртнĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем, противникăн атакине сирсе ярса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 3 самолетне персе ӳкернĕ, 3 орудие, грузсем тиенĕ 10 вагона пĕтерсе тăкнă тата противникăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Хиненко капитан командир пулса ертсе пыракан боецсем противникăн утлă атакине сирсе янă, 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет боецĕсем икĕ высотана нимĕçсенчен тасатнă. Артиллерипе тата минометпа персе, темиçе дзота çĕмĕрнĕ тата противникăн миномет батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери миномет батарейине тата противотанковăй пĕр туппа пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, 10 дзота, 14 блиндажа тата 3 наблюдательнăй пункта çĕмĕрнĕ.

* * *

Минск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ юлашки 20 кун хушшинче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен 3 поездне ӳпĕнтерсе янă. 23 вагон çĕмĕрĕлнĕ, 28 вагон сиенленнĕ. Çав отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ горючи турттаракан поезда вут тĕртнĕ, вара бензин тултарнă 11 цистерна çунса кайнă. Çав вăхăт хушшинчех çав отрядăн партизанĕсем засадăран персе нимĕçсен пĕр подполковникне, икĕ лейтенантне тата 47 салтакне вĕлернĕ.

Тепĕр отрядри партизансем нимĕçсен чугунçул çинчи хуралне хăюллăн тапăннă. Совет патриочĕсем 10 гитлеровеца вĕлернĕ, паровоза стройран кăларнă тата чугунçула сирпĕнтерсе янă.

* * *

Тыткăна парăннă нимĕç ефрейторĕ Ганс Фольгнер çапла каласа панă: «Нимĕçсем радио тăрăх кашни кунах вырăссен авиацийĕ калама çук пысăк çухатусем тӳсни çинчен пĕлтереççĕ. Çав пĕлтерӳсем мĕнтери суя иккенне çак пример кăтартса парать. Октябрь пуçламăшĕнче эпĕ Отто обер-лейтенантпа пĕрле автомашинăпа Сычевкăран Вязьмăна кайрăм. Çав вăхăтра султан сылтăмра выртакан аэродрома вырăссен 37 самолечĕ тапăнчĕ. Эпир машинăран сиксе тухрăмăр та çĕр çине выртрăмăр. Унта вырăс летчикĕсем хăйсене хăйсем хуçа пек туйса тăчĕç. Зенитнăй артиллери пенине пăхмасăрах, вĕсем питĕ аялтан вĕçсе çӳрерĕç. Унта эпĕ вырăссен пĕр бомбардировщикне вут тивнине куртăм. Ытти самолетсем пурте хăйсен бомбисене пăрахрĕç те каялла вĕçсе кайрĕç. Офицерсенчен пĕри Отто обер-лейтенанта çапла каларĕ: «Вырăссем паян килсе кайни пире питĕ хакла ларчĕ. Вĕсем 50 самолета яхăн пĕтерсе тăкрĕç», терĕ. Ирхине, эпир Вязьмăна çитсен, радио тăрăх çакăн пек пĕлтерчĕç: «37 совет самолечĕ пирĕн вăтаçĕрти фронтри пĕр аэродрома тапăнма хăтланнă. Пирĕн зенитнăй артиллери советсен 24 самолетне пĕтерсе тăкнă».

Çав пĕлтерĕве илтсен, эпĕ нимĕçсем радио тăрăх намăса пĕлмесĕр мĕн тери хытă суйнине, радио итлекенсене пурне те улталанине тепĕр хут пĕлтĕм».

* * *

Нимĕçсен фашистла бандичĕсем Чуев красноармеецăн Ленинград облаçĕнчи Городня ялĕнче пурăнакан çемьине тискеррĕн персе вĕлернĕ. Нимĕçсем Чуевăн арăмне, икĕ ывăлне тата хĕрне персе вĕлернĕ. Персе вĕлернисен виллисем нумайччен çул хĕрринчи канавра выртнă, мĕншĕн тесессĕн гитлерла бандитсем вĕсене пытарма ирĕк паман.

Сталинградшăн пыракан çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Сталинград районĕнче совет войскисем оборонăра тăрса вăйлăн çапăçнă. Çапăçусем кăнтăрла та, çĕрле те чарăнмаççĕ. Çĕнĕ резервсем илсе пынă хыççăн нимĕçсем хулан çурçĕр пайĕнче наступлени пуçласа янă. Тăшманăн пехоти 40 танк пулăшса пынипе рабочи поселок районĕнчи пирĕн опорнăй пунктсене атакăланă. Хаяр çапăçура совет чаçĕсем нимĕçсене хăйсен малтанхи позицийĕсем çине хăваласа янă, вĕсене чылай пысăк çухатусем кӳнĕ.

Пăртак тăрсан, гитлеровецсем, тата темиçе вуншар танк илсе пырса, тепĕр хут наступлени тунă. Фашистсен иккĕмĕш атакине те сирсе янă. Противник хăйĕн танкĕçсемпе чĕрĕ вăйне нумай çухатса, каялла сирпĕнсе кайнă. Каç пулнă çĕре çапăçусем малтанхи рубежсенчех пынă.

Нимĕç авиацийĕ питĕ активлăн кĕрешет. Фашистсен бомбардировщикĕсем кунне 2000 хут таран вĕçсе тухаççĕ. Бомбăсем çурăлнипе хуралса кайнă çĕр çине металл çумăрĕ пĕр чарăнмасăр çуса тăрать. Пирĕн боецсем пысăк хастарлăхпа тата çирĕп кĕрешеççĕ. Пехотинецсем, артиллеристсем, танкистсем, тăшман бомбăсем питĕ йышлăн пăрахса тăрать пулин те, противникăн техникипе чĕрĕ вăйне ватса-çĕмĕрсе параççĕ. Пĕр кун хушшинче пирĕн чаçсем тăшманăн питĕ нумай танкне çунтарса янă тата 10 самолетне ытла персе ӳкернĕ.

Совет летчикĕсем, пехотăн çапăçури речĕсене ăнăçлăн хӳтĕлесе пырса, тăшманăн нумай самолетне персе ӳкернĕ. Лавриненко летчик пĕр вăхăтрах нимĕçсен темиçе истребителĕпе çапăçнă. Унăн самолетне сиенленĕ, хăйне амантнă. Апла пулсан та, малтан пырса атакăласа вăл «Мессершмитт—109» йышши самолета персе ӳкернĕ те хăйĕн базине ăнăçлăн таврăннă.

Чуйкин майор ертсе пыракан летчикистребительсем нимĕç самолечĕсен пысăк ушкăнне тĕл пулнă. Пуçланса кайнă çапăçура пирĕн истребительсем противникăн 8 самолетне персе ӳкернĕ.

Д. ЩУКИН,
Н. МАРКОВСКИЙ.

Хĕле хатĕрленеççĕ

КАЛИНИНО. Тури Карачурари «Ленин çулĕпе» колхоз выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленсе çитрĕ. Колхоз çак кунсенче 70 тонна силос хывре, выльăхсене çитерме тымар-çимĕçсем çителĕклĕ таранах хатĕрлерĕ, витесене юсаса ăшăтрĕ.

Колхозник В. Николаев юлташ кăçалхипе вуннăмĕш çул колхозра лашасене пăхса пурăнать. Халĕ вăл хăйĕн ĕçне татах та лайăхлатрĕ. Николаев пăхакан лашасем мăнтăр, яланах таса, вăл çамрăк конюхсене ĕçре пример кăтартса тата вĕрентсе пырать.

Г. МАТВЕЕВ.

* * *

ЭЛĔК. Кураккассинчи «Хурăн çул» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма тимлĕн хатĕрленет. Фермăсене тасатнă, стенасемпе маччасене ăшă тытакан тунă, СТФ витине шал енчен шуратнă. Выльăхсем валли апат çителĕклĕ хатĕрлесе хунă.

Колхоз пур выльăх-чĕрлĕхсен йышне те планпа кăтартнă хисепе çитерчĕ. Плана ĕнесемпе сурăхсем енĕпе 100 процент, сыснасем енĕпе 180 процент, чăххисем енĕпе 155 процент тултарнă.

Фермăсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе колхоз председателĕ О. Кононова тата фермăсен заведующийĕ И. Николаев тăрăшса ĕçлерĕç.

М. КУСТИКОВ.

Октябрь уявĕ умĕн социализмлă ăмăрту

Вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Йĕпреç районĕ малта пырать

ЙĔПРЕÇ, октябрĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Йĕпреç леспромхозĕнче 4 район—Йĕпреç, Шупашкар, Октябрьски тата Канаш районĕсем ĕçлеççĕ. Октябрĕн 18-мĕшĕ тĕлне вĕсем вутă хатĕрлемелли çур çулхи плана касас енĕпе 85,5 процент, турттарас енĕпе 79,7 процент тултарнă. Районсенчен хальхи вăхăтра Йĕпреç районĕ малта пырать, вăл вутă хатĕрлевĕн çур çулхи заданине пур енĕпе те ирттерсе тултарнă.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура вăрманта ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхĕ татах та ӳсрĕ. Лучковăй пăчкăпа ĕçлекен Алим Аксянов юлташ кунне 16 кубометр таран вутă касать. Вутă хатĕрлес нормăна Иван Ефимов юлташ 3 хут ирттерсе тултарать. Паллă стахановец Василий Чураков, вăрманта виçĕ уйăх çурă ĕçлесе, норма тăрăх 182 кубометр вутă хатĕрлес вырăнне 360 кубометр хатĕрленĕ.

Шупашкар районĕнчен пынă колхозниксем те хастарлă ĕçлеççĕ. Район вутă хатĕрлемелли задание çӳлте асăннă вăхăт тĕлне касас енĕпе 100 процент, турттарас енĕпе 92 процент тултарнă.

Октябрьскипе Канаш районĕсем вара малтанхи пекех юлса пыраççĕ. Вĕсем хăйсен заданийĕсене тултараймании ĕç вăйĕ çителĕксĕр уйăрса панинчен килет.

Д. МИХАЙЛОВ.

Машинист Чернышов

Хусанпа Рузаевка хушшинче йывăр составсене илсе çӳрекен таса та юсавлă паровоз пĕр-пĕр станцине çитсе чарăнсанах, çак вăйлă машина регуляторĕ умĕнче кам тăнине дежурнăйсем лайăх пĕлеççĕ.

— Чернышов çитрĕ...

Лутрарах кĕлеткеллĕ, анчах чĕрĕ те патмар Чернышов, паровозсене илсе çӳрекен ытти юлташсем умĕнче тахçанах пултарулă та ăста машинист, примерлă железнодорожник шутланать.

— Евгений Васильевичăн машини çинче пĕр тутăх та, пĕр шăтăк та кураймăн,—теççĕ старик сем те, илемлĕ паровоз çине ăшшăн пăхса.

Паровоз çинче çирĕм тăватă çул ĕçленĕ хушăра машинист Чернышов пурне те курнă темелле. Анчах та çак чăрсăр, тытма пĕлсен лайăх итлекен паровозран ăна нимĕнле йывăрлăх та уйăрма пултарайман. Вунсакăр çулхи яш ача машинист пулăмне ярса пуссанах çакна ăнланнă: унăн ĕçĕ—регулятор умĕнче, пурнăçĕ—чугунçул çинче.

Вĕри тар юхтаракан пекарньăри, сухăр шăршиллĕ лесопилкăри кăмăла кайман ĕçсем хыçала юлнă, локомотив Чернышовăн çĕнĕ те йывăр шкулĕ пулса тăнă. Çуллахи вĕри шăрăхра та, хĕллехи çил-тăманра та Чернышов хăйĕн вырăнĕнче пулнă, çапла вăл кочегартан машинист пулса тăнă.

Халĕ вăл ăста машинист. Икĕ пин тонна турттакан йывăр составсене хăвăрт тата пĕр аварисĕр илсе çӳрет. Çав вăхăтрах топливăна, сĕрмелли çусене нумай перекетлет; антинакипинпа усă курса, паровоз хуранне упрать; буксовкăсене тумасăр бандажсене сыхлать.

Машинăна юсама вăхăт çитсен, осмотрщиксем унăн çине пăхаççĕ те савăнăçлăн:

— Пĕр-ик çĕрте анчах кăштах ал тĕкмелле, машина татах та чупма пултарать,—теççĕ.

Отечественнăй вăрçă стахановец-машиниста ĕлĕкхинчен ытларах чăрсăрлатрĕ, ĕçченлетрĕ. Фронт хĕçпăшалсем, боеприпассем, çынсем вăхăтра ыйтать. Патриот Чернышов юлташ ăна лайăх ăнланать: «Хăвăртрах, кашни минутăшăн кĕрешни, графика пурнăçа тĕрĕс кĕртни — акă мĕн татса парать пирĕн ĕçĕн ăнăçлăхне», тет вăл.

Çирĕп çыннăн сăмахĕ ĕçрен уйăралмасть. Унăн машини яланах график тăрăх çӳрет, çĕршывпа фронта кирлĕ грузсене вăхăтра çитерсе парать. Çав вăхăтрах вăл хăйĕн паровозне хĕле кĕме хатĕрлет.

— Паровоз лайăх ĕçлени—тăшмана çапни пулать, тет Чернышов юлташ, инçе çула тухас умĕн хăйĕн машини çине ларса.

Т. КАРАСЕВА.

Государствăна тырă леçеççĕ

ЭЛĔК. октябрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Ураскилт ялсоветĕнчи колхозсем государствăна тырă, аш-какай, пахча-çимĕç парас ĕçе Октябрь уявĕччен пĕтĕмпех татма сăмах пачĕç. Хăйсен сăмахне вĕсем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Октябрĕн 10-мĕшĕнче «Маяк» колхоз 32 лавлă Хĕрлĕ обозпа хатĕрлев пунктне 96 центнер, «Хăват» колхоз 12 лавпа 36 центнер, Молотов ячĕпе тăракан колхоз 12 центнер тырă леçнĕ. Патракассинчи «Броневик» колхоз, октябрĕн 15-мĕшĕнче государствăна юлашки хут 13 лав тырă леçсе парса, тырă парас ĕçе ăнăçлăн вĕçлерĕ.

Х. ЛИСИН.

ВЛКСМ Элĕк райкомĕ кĕрхи çĕртме тăвас ĕçрен аякра тăрать

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ хушнипе пирĕн республикăри комсомол организацийĕсем те кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Ку тĕлĕшпе халĕ комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш вунăкунлăхĕ пырать. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте чылай районсемпе колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ, лашасене Валентин Нагорный пек улăштарса ĕçлесе, кĕрхи çĕртмене кăçал нумайрах та лайăхрах туса, хăварассишĕн кĕрешеççĕ.

Анчах Элĕк районĕнчи колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе кăçал уйрăмах кая юлса пыраççĕ. Çакна шута илсе, ВЛКСМ Элĕк райкомĕн октябрĕн 10-мĕшĕнче пуçланнă икĕ вунă кунлăха районри пур комсомолецсемпе çамрăксене те хутшăнтармалла пулнă. Анчах та икĕ вунăкунлăх пуçланнăранпа вуникĕ кун иртрĕ пулсан та, комсомол организацийĕсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе кирлĕ пек хутшăнни çук-ха. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Васильева юлташ çакна хăй те йышăнать.

— Япăххи япăх та-ха, анчах эпĕ пĕччен мĕн тума пултарăп-ха,—тет Васильева юлташ. Васильева юлташăн çак сăмахĕсенчен ВЛКСМ Элĕк райкомĕ районри комсомолецсемпе çамрăксен массипе епле çыхăнса ĕçлени уççăнах курăнать.

Кĕрхи çĕртме тумалли икĕ вунăкунлăха хутшăнас пирки ВЛКСМ райкомĕ комсомолăн колхозсенчи пуçламăш организацийĕсен секретарĕсемпе канашлу туса ирттернисĕр пуçне урăх нимĕн те туман. Комсомолецсем ĕçе епле хутшăнса пынипе те интересленмен, вĕсен ĕçне шута илсе пырас тĕлĕшпе те нимĕн те туман. Икĕ вунăкунлăх пуçланнăранпа эрне хушшинче Васильева юлташ пĕр колхозра та пулман, комсомол организацийĕсем вырăнта ĕçе мĕнле йĕркелесе пынипе интересленмен. Çакăн пек ертсе пыма [illegible]рать-и вара пуçламăш организацисен ĕçне?

Куракăшри «Безбожник» колхозри комсомолăн пуçламăш организацийĕнче 16 комсомолец. Вĕсенчен хăшпĕрисем Элĕкре ĕçлеççĕ, кашни кунах килĕсене çӳреççĕ. Колхоз производствинче ĕçлекенсем 6 комсомолец. Вĕсенчен кĕрхи çĕртме тунă çĕрте пĕр Рыбаков комсомолец çеç ĕçлет. Вăл та нормăна тултарса пымасть, Валентин Нагорный ĕçĕ çинчен вăл пачах та илтмен. Комсомол организацин секретарĕ Шлябин юлташ икĕ вунăкунлăхăн задачисем çинчен комсомолецсемпе çамрăксене пачах пĕлтермен. Шлябин комсомолец колхоз счетовочĕ пулса ĕçлет, вăл колхоз председателĕн помощникĕ шутланать. Никамăн та мар, пуринчен ытла унăн кĕрхи çĕртме тăвас ĕçшĕн çунмалла, çак ĕçе кашни комсомолеца, çамрăка мобилизацилемелле. Район центрĕнче ĕçлекен, шкулсенче вĕренекен комсомолецсемпе çамрăксем те канмалли кунсенче колхозра мĕншĕн суха тумалла марха! Колхоз счетовочĕ, комсомол организацин секретарĕ пулса ĕçлекен комсомолецăн—Шлябин юлташăн çакăн çинчен чи малтан шухăшламалла, ответлăха туйса ĕçлемелле.

Качалаври, Татмăшри комсомолăн пуçламăш организацийĕсем ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ кăтартса панисене сӳтсе-явман, икĕ вунăкунлăха пачах хутшăнман. Ку колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçпе районра чи кайра пыраççĕ. Татмăшри комсомол организацин секретарĕ Хĕрлĕ Çар ретне кайни пĕр уйăх ытла ĕнтĕ. Анчах ВЛКСМ райкомĕ кунта суйлав пухăвне туса ирттерме халĕ те шутламасть.

Путланти, Юманайĕнчи колхозсенче те комсомолецсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе тивĕçлипе хутшăнман.

ВЛКСМ Элĕк райкомĕн ĕçне халех вăйлатмалла. ВЛКСМ райкомне пуçламăш организацисемпе тачăрах çыхăнтармалла, комсомолăн районри активне çирĕплетсе çĕнĕ, çивĕч ĕçсем тума çĕклемелле.

Х. ЛИСИН.

Октябрĕн 19-мĕшĕ. (Хамăр корр.).

Районри ялхуçалăх выставкин кандидачĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Алманчăри «12 лет Октября» колхозăн фермисенче хĕрӳ ĕç пырать. Колхоз выльăх-чĕрлĕх енĕпе районри ялхуçалăх выставкине тухма хатĕрленет.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура колхозниксем, колхоз фермисенче ĕçлекенсем те активлăн хутшăнаççĕ. Колхоз общественнăй выльăх-чĕрлĕхе хĕле лайăх хатĕрленсе кĕртессишĕн, выльăх-чĕрлĕхе [illegible] тата вĕсен продуктивлăхне ӳстерессишĕн куллен тимлĕн ĕçлеççĕ. [illegible] колхоз ĕне фермине кăçалхи план тăрăх 70 пуç ĕне-пăру пулмалла, паянхи кун фермăра 83 пуç ĕне, вăл шутра савăкан ĕнесем 22 пуç.

Ĕнесен продуктивлăхне ӳстерессипе [illegible] 1.650 литр сĕт суса илмелле. Халĕ, 1942 çулăн 300 кунĕ тĕлне, колхоз кашни фуражлă ĕне пуçне 1.054-шар литр сĕт суса илнĕ. Çапла, сĕт суса илес тĕлĕшпе çулталăкри плана ферма 10 уйăх хушшинче ăнăçлăн пурнăçланă. Уйрăм доярсен паха ĕçне пула хăшпĕр [illegible] ĕнесемех хăйсен продуктивлăхне вăйлăн ӳстернĕ. «Красуля» ятлă ĕне кăçал пурĕ 1.650 литр, «Ласточка» ĕне — 1.700 литр, «Катя» ĕне — 1.600 литр сĕт панă.

«Красуля» ятлă выльăхĕ ĕне кăçал малтанхи уйăхсенче 3,5 литртан ытла сĕт паман. Ăна доярка Фадеева юлташ пăхма пуçланăран вара ĕне йăлтах улшăнчĕ. Халĕ «Красуля» талăкра 7,5—8-шар литр сĕт парать. Çавăн пекех ытти ĕнесем те сĕт ытларах пама пуçларĕç. Кашни кунах купăста, çĕрулми пĕçерсе, тăварпа хутăштарса çитереççĕ.

Ĕнесен продуктивлăхне ӳстерес тĕлĕшпе [illegible] 17 пăру, 16 тунă, 10 чăх [illegible] илнĕ. Выльăх-чĕрлĕхсене [illegible] хĕле лайăх хатĕрленнĕ, [illegible].

Колхозăн фермисем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене памалли плана ăнăçлăн пурнăçланă. Кăçал [illegible]. Колхозăн фермисен заведующийĕ Е. Сергеева, райçĕрĕç пайĕн зоотехникĕ М. Филиппова [illegible].

С. ШАДИН.

Октябрĕн 21-мĕшĕ. (Хамăр корр.).

Çĕрулми типĕтеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри колхозсем государствăна пахча-çимĕç памалли обязательствăна хăвăрт пурнăçласа пыраççĕ.

Çакăнпа пĕрлех районри колхозсем государствăна çĕрулми, пахча-çимĕç типĕтсе пама тытăнчĕç. Кашни колхозрах пахча-çимĕçсем типĕтме ятарласа çынсем уйăрнă. «Путь Ленина», Тимошенко, Ворошилов ячĕсемпе тăракан колхозсем 30—40-шер килограмм çĕрулми типĕтнĕ те ĕнтĕ.

В. ЯРУКИН.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парторганизацин организациллĕ ĕçне çӳлерех çĕклессишĕн

ОКТЯБРЬСКОЕ. Октябрĕн 18-мĕшĕнче коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху пĕр ыйту — ВКП(б) райкомĕн ĕçĕсем çинчен калакан отчета тата партин район комитетне суйласси çинчен сӳтсе-явнă. Пухура ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Никитин юлташ пулчĕ.

Малтанхи ыйтупа ВКП(б) Октябрьски райкомĕн секретарĕ Игнатьев юлташ районри парторганизацин иртнĕ суйлав пухăвĕнчен пуçласа паянхи кунччен тунă ĕçĕсем çинчен отчет туса панă. Вăл хăйĕн докладĕнче уйрăмах отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче районри парторганизацин тунă ĕçĕсем çинче чарăнса тăчĕ.

Районри парторганизаци отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн ĕçне фронт ыйтнă пек çĕнетсе йĕркелеме пултарнă. Вăл хăйĕн партиллĕ-организациллĕ ĕçне тылри [illegible] задачисемпе çыхăнтарса туса пынă. Район ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă ĕлкĕрсе пырать. Кĕракине тата тырпулсене пухса кĕрес ĕçре районри колхозсем кăçал кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа турĕç. Нумай колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене организованно вĕçлесе, [illegible] «Красная Чувашия», Калинин ячĕпе тăракан, «Путь Ленина», «Заря», «Венера», «Комсомолец» колхозсем государствăна кăçал [illegible] туса панă.

Анчах та вăхăтра çапас тĕлĕшпе район кăçал чылай юлса пырать. Октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне анан çапас ĕçе вăл 56 процент çеç пурнăçланă. Çавăн пекех кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе те чылай юлса пырать. Государствăна тыр памалли плана район 71 процент, çĕрулми памалли плана 39 процент çеç пурнăçланă. Ку тĕлĕшпе уйрăм колхозсем чăтма çук юлса пыраççĕ. «Красный борец», Маяковский ячĕпе тăракан, «Вулкан» колхозсем паянхи куна çитсе те государствăна çĕрулми пама тытăнман.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана район мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 100,8 процент, сыснасем енĕпе 109 процент, сурăхсем енĕпе 83,5 процент пурнăçланă. Колхозсен фермисене выльăхсемпе комплектласа çитерес ĕçе ĕне-пăрусем енĕпе 78 процент, сурăхсем енĕпе 76 процент çеç пурнăçланă. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене парас ĕç нумай колхозсенче çителĕксĕр пулса пырать.

ВКП(б) райкомĕ çак иртнĕ вăхăтра парти ретне çĕнĕрен 98 çынна, вĕсен шутĕнче ВКП(б) членне — 50 çынна, кандидатсен ретне — 48 çынна илнĕ. Хăйсен пĕтĕм вăйне фронтпа çĕршыва пулăшнă çĕре хурса ĕçлекен çулăмлă патриотсем Ленин—Сталин аслă партине кĕрес туртăмĕ пысăк. [illegible] ретне 67 процент ӳстернĕ. [illegible]

Анчах та районри парторганизацисен ĕçĕнче [illegible]. Шенерпуçĕнчи, Кутемерти, уполнаркомзагри парторганизацисем партиллĕ-организациллĕ ĕçре пачах та çителĕксĕр туса пынă. Ку парторганизацисен секретарĕсем ВКП(б) райкомĕн решенийĕсене [illegible].

Райкомăн инструкторĕсем колхозсенчи парторганизацисене çителĕксĕр пулăшса пынă. Ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшман. [illegible] (Попов, Шаготов тата ытти те).

ВКП(б) райкомĕн кадрсемпе ĕçлекен пайĕ хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтĕнчи [illegible] пек çĕнетмен. Районри партиллĕ ĕçри тата колхозсенче ертсе пырас ĕçри кадрсем [illegible].

Парторганизацисене, партиллĕ ĕçе ертсе пырас ĕçре [illegible] çынсем тăнă, анчах [illegible] пынă. Районри коммунистсен пухăвĕ çакна [illegible] палăртрĕ.

Пуху партиллĕ пропаганда ĕçне вăйлатма кирлине кăтартса хăварчĕ, партиллĕ ĕçĕн малаллахи задачисене палăртса тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Районри коммунистсен пухăвĕ кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйтупа партин районри комитетне суйларĕ. ВКП(б) райкомĕн составне Игнатьев, Алексеев, Атлашева, Петрова, Фролов, Портнов, Чурмакова юлташсене суйласа хăварчĕ.

А. РУДЕНКО.

ÇАПĂÇУ ХЫÇÇĂН

Выртать ирсĕр вилĕ:
Пуç чашăкĕ çурăк,
Шăлне çыртса лартнă çатах.
Тем кирлĕ пулсан та
Ыйтаймĕ вăл урăх,
Ăна çава тĕпĕ çăтать.

Тăхлан пульăсем
Кăкринчен ала тунă,
Хура юнĕ юхать-ха. Тискер,—
Выçса антăхан
Куçĕсем ун пытаннă,
Тĕп пулнă тăшман—
Офицер.

Вăл килнĕ кунта
Пурлăхпа çĕр илесшĕн,
Халăха асап-хурлăх пама.
Ак, пурлăх сана,
Çĕр ил хапсăннишĕн—
Анчах та пĕр чалăш кăна!

Памастпăр нумай,
Саншăн мар Совет çĕрĕ
Ешĕрсе сĕткен пухнă туллип.
Сире масар çеç
Пинĕн-пинĕн пытарĕ,
Пĕр шит те илеймĕр
Пуянлăх валли.

Чĕнменччĕ сана;
Хăвах килтĕн, тĕп пултăн
Эпир алхасмашкăн хушман.
Пуç хутăр кунта
Паян ир ултçĕр ултăн,
Ĕнтĕ çук
Ултçĕр ултă тăшман.

Малалла юлташсем,
Малалла каяр, тетпĕр!
Чакмастпăр эпир каялла.
Урнă йытăсене —
Халь сире пĕтеретпĕр,
Памастпăр ахаль хулана та
Яла.

Шĕл-кăварлă вут пек
Вĕри пирĕн хаярлăх,
Çĕленсемшĕн—эпир те тискер.
Кашни совет çынĕ
Паян пĕр каварлă,
Пуçу çурăк çампа,
Офицер.

Ив. МАЛГА.

Ют çĕршывсенче

Хэлл „Правда" хаçатăн умстатьи пирки калани

ВАШИНГТОН, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Пресс-конференцире «Правдăн» октябрĕн 19-мĕшĕнчи умстатьинче Гесс çинчен кăларса тăратнă ыйту пирки ыйтсан, государственнăй секретарь Хэлл çапла каланă: «Правда» кăларса тăратнă ыйту вăл халăхи вăхăтра Америка правительствинчен ытларах Англи правительствине тивет. Вăрçăри преступниксене вăрçă вăхăтĕнче суд тума лайăх-и? тесе ыйтсан, Хэлл çапла каланă: ку ыйту Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе ытти çĕршывсен правительствисем пĕрпĕрин патне янă документсемпе та ă çав правительствăсем çак пĕтĕмĕшле ыйту тĕлĕшпе хăйсем мĕнле позици йышăнни çинчен каласа панипе çыхăнса тăрать. Çавăнпа та халь çав ыйтăва н пĕр-пĕр уйрăм енне сӳтсе-явма кирлĕ мар, тенĕ.

Общинăсен палатинче Гесс çинчен ыйтни

ЛОНДОН, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ют çĕршывсен министерствин парламент секретарĕ Лоу общинăсен палатинче панă ыйтусем çине çапла ответленĕ: Англи правительствине никам та Рудольф Гессăн арăмне Англие упăшки патне килме ирĕк пама сĕнмен, тенĕ.

«Черчилль каланă тăрăх,—тенĕ Лоу,— Гесса тыткăна лекнĕ çын вырăнне хураççĕ, ăна тыткăнри çынсене тыткаланă пек тыткалаççĕ. Кам та пулсан Гессăн арăмне Англие яма ыйтнă пулсан та, ăна ун пек май парасси çинчен пĕр сăмах та пулма пултарайман пулĕччĕ, ун пек май парасси çинчен тыткăнри çынсем çинчен калакан нимĕнле конвенцире те каламан».

Палата членĕсенчен пĕри—лейборист—«тыткăнри çынсене тыткаланă пек тыткалаççĕ» тени вĕсене сăнчăрланине пĕлтерет-и тесе ыйтсан, Лоу вăл ыйту çине ответ паман. (Палатăн çав членĕ çав ыйтăва Германи влаçĕсем Англин тыткăна лекнĕ çыннисене сăнчăрлама хушнине асра тытса панă пулас).

Массарик Чехословаки халăхне чĕнсе калани

ЛОНДОН, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакин Лондонри представителĕсем каланă тăрăх, Франк хăйĕн сăмахĕнче ют çĕршывсене тухса кайнă чехословаксен хурăнташĕсене тĕрлĕ çĕре куçса çӳреме тата çĕршывран тухса кайма чарассипе хăратнă; çакă вăл, уйрăмăн илсен, Чехословакин государственнăй совечĕн членĕсене хирĕç пырать. Чехословакин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ян Массарик Лондонра Чехословаки халăхне радиопа чĕнсе каланă, вăл çапла каланă: «Ирсĕр Франк сире тата пире хăратма пултарать тесе шухăшлать пулсан, вăл пысăк йăнăш тăвать. Эпир хамăр ĕçе малалла туса пырăпăр, эсир малалла кĕрешĕр. Вăрçăри преступленисемшĕн айăплă çынсене пурне те наказани парасси çинчен эпир союзниксемпе пĕрле решени йышăнтăмăр ĕнтĕ. Çавăн çинчен эпĕ халь сире, асап тӳсекенсене, Чехословаки правительстви ячĕпе тата мĕнпур союзлă правительствăсен ячĕпе тепĕр хут калатăп. Эпир вĕсене хытă, питĕ хытă айăплăпăр».

„Пĕтĕм Америкăри демократишĕн пыракан кĕрешĕвĕн совечĕ" Испанипе çыхăну тытса тăма пăрахма ыйтать

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Пĕтĕм Америкăри демократишĕн пыракан кĕрешĕвĕн совечĕ» Рузвельта çыру çырса пичетленĕ, çав çырăва паллă деятельсем 400 çын ытла алă пуснă, вĕсем унта Испанипе дипломатиллĕ çыхăну тытса тăма пăрахма ыйтаççĕ.

Испания вăл фашистла çĕршыв, Испани фалангисчĕсем латинла Америкăра Пĕрлешӳллĕ Штатсем тĕлĕшпе тата вĕсен çар хăвачĕ тĕлĕшпе иккĕленӳпе шанманлăх сарма тăрăшаççĕ. Латинла Америкăри франкистла агентсем, дипломатиллĕ тĕкĕнменлĕхпе усă курнипе гитлерла агентсенчен çăмăлтарах куçса çӳреме пултараканскерсем, тĕнĕл держависен подводнăй лодкисене пĕрлешнĕ çĕршывсен суднисене торпеда ярса путарма пулăшса тăраççĕ.

Уэллес Чилипе Аргентина позицийĕ пирки тунă заявлени çинчен Латинла Америкăри çĕршывсенче мĕн калаçаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Латинла Америкăран килекен хыпарсем тăрăх, Уэллес Чилипе Аргентина позицине сивлесе каланине Америкăри нумай çĕршывсенче ырлаççĕ; çавăн пекех Аргентинăпа Чили общественноçĕн нумай çыннисем, тахçантанпах тĕнĕл держависемпе çыхăну тытассине хирĕç тухса калаканскерсем, Уэллес заявленине ырлаççĕ.

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Колумбин паллă официальнăй представителĕ çапла каланă: Колумби президенчĕ Люпесе тата Венецуэла президенчĕ Медина иккĕшĕ пĕрле Чилипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене тачăрах çыхăнтарма тăрăшаççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем Чилипе Аргентинăна Америка континентĕнчи çĕршывсен пĕрлехи мероприятийĕсене активлăнрах пулăштармалли майсем çинчен тĕплĕн сӳтсе-явнă.

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Никарагуа республикин президенчĕ Самоса та хăй Уэллес заявленийĕ майлă пулни çинчен каланă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн çар суднисем Гвадак утравĕнчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Японин тинĕс çинчи нумай суднисене атакăланă. Япони суднисем çинче пушарсем тухнă. Америкăн çар суднисен Соломон утравĕсем патĕнчи операцийĕсене пулăшса пырса, союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем Японин Шортлэнд утравĕ районĕнчи çар суднисемпе транспорчĕсене темиçе хут та атакăланă. Союзниксен авиацийĕ Рекат заливĕ районĕнче Японин 33 самолетне пĕтерсе тăкнă.

СССР Совнаркомĕнче

ВИЛНĔ МИХАИЛ ВАСИЛЬЕВИЧ НЕСТЕРОВ ХУДОЖНИКĂН ÇЕМЬИНЕ ПУЛĂШУ ПАРАССИ ÇИНЧЕН

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăннă:**

1. Вилнĕ М. В. Нестеров художникăн çемьине — арăмне Екатерина Петровна Нестеровăна, хĕрне Ольга Михайловнăна тата ывăлне Алексей Михайловича — 10.000 тенкĕ пĕр вăхăтлăх пособи памалла тунă.

2. М. В. Нестеров çемьине персональнăй пенси парса тăмалла тунă: арăмне Екатерина Петровна Нестеровăна мĕн виличченех уйăхне 500-шер тенкĕ, хĕрне Ольга Михайловнăна тата ывăлне уйăхне 300-шер тенкĕ парса тăмалла.

3. М. В. Нестерова государство шучĕпе пытармалла тунă.

—◦—

Кĕрхи çĕртме туни— тырпулшăн кĕрешни пулать

Нумай çулхи практика кĕрхи çĕртме вăйлă тырпул туса илес ĕçре çавтери пысăк вырăн йышăнса тăнине ĕненмеллех кăтартса пачĕ. Кĕрхи çĕртмене лайăх туса хăварни тăпран тухăçлăхне ӳстермелли майсенчен пĕри пулса тăрать. Çавăнпа та кĕрхи çĕртмене тĕп çĕр ĕçĕ теççĕ. Пирĕн республикăри малта пыракан колхозсем: Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан, Калинино районĕнчи Пушкин ячĕпе тăракан кохозсем, кĕрхи çĕртмене агротехникăллă тĕп мероприятисенчен пĕри вырăнне хурса, ку енĕпе паха çитĕнӳсем тунă. Кĕрхи çĕртмене вăхăтра тата пахалăхлăн туса хăварни тырпул тухăçлăхне 30 процента çити е ытларах та ӳстерме май парать.

Кĕрхи çĕртме çавăн пекех тата килес çулхи çуракине кая юлмасăр, кĕске срoксенче ăнăçлăн туса ирттерме пулăшать. Кĕрхи çĕртмене лайăх туса хăварнă çĕрте çуркунне культиваци тусан тата сӳрелесен, вара çав çĕре тырă акма çителĕклех хатĕр тесе шутламалла. Пуринишĕн те паллă, культиваци тума туртăм вăйĕ сахалтарах кирлĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕ, 1941 çулти кĕркунне кĕрхи çĕртме тумалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнине пула, çак çулхи çуракине питех те ăнăçлăн туса ирттерчĕ. Çавна май Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем тырпула та тухăçларах туса илчĕç.

Шăмăршă, Первомайски, Йĕпреç районĕсем кăçалхи çуракине вăраха ячĕç, мĕншĕн тесен, çак районсенче кĕрхи çĕртме сахал туса хăварнă пирки, çĕре çуркунне нумай сухалама лекрĕ, çавна тума ĕç вăйĕ нумай кирлĕ пулчĕ.

Кĕрхи çĕртме тунă çĕре çуркунне акас умĕн лайăх ĕçлесе хăварсан, çакă вăл çумкурăкĕсене тата тырпулшăн сиенлĕ хурткăпшанкăсене пĕтерме чылаях май парать. Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Кувакино районĕсенчи уйрăм колхозсен уйхирĕсенче çĕре начар ĕçлесе пынă пирки çуртыррисене çумкурăкĕ вăйлăн пусса илнĕччĕ. Çав колхозсенче çумçумлама нумай ĕç вăйĕ кирлĕ пулчĕ. Килес çул çакăн пек ан пултăр тесен кĕрхи çĕртме тумалли плана пĕр пăркаланмасăр пурнăça кĕртмелле.

Анчах та кĕрхи çĕртме тăвас ĕç республикăра калама çук вăрахăн пулса пырать-ха. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе питех те пысăк вырăна хурса, çав ĕçе тума мĕнпур лашасен 40 процентĕнчен кая мар уйăрмалла тунă. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ кашни район валли кĕрхи çĕртме тумалли график палăртса пачĕç. Анчах та уйрăм районсем, сăмахран, Кувакино, Красноармейски, Пăрачкав тата Чкаловски районсем кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе тӳсме çук кая юлса пыраççĕ, çавна пула кĕрхи çĕртме планĕ путланса ларас хăрушлăх умĕнче тăрать. Çав районсенчи çĕрĕç пайĕсен заведующийĕсем, МТС-сен директорĕсемпе политотделсен начальникĕсем кĕрхи çĕртме тумалли плана пурнăçа кĕртменни 1943 çулти çуракинче пысăк йывăрлăхсем кӳрессине тата тырпул тухăçлăхне чакарассине шута илмеççĕ.

Чылай колхозсенче кĕрхи çĕртме ĕçĕн хисепĕ хыççăн кайса ĕç пахалăхĕ çинчен манаççĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕн решенийĕнче кĕрхи çĕртмене 18—20 сантиметртан ăшăх мар сухалама кăтартса панă. Улатăр, Кувакино тата ытти хăшпĕр районсенчи уйрăм колхозсем кĕрхи çĕртмене 7—9 сантиметр тарăнăшĕ сухаласа, кĕрхи çĕртмен агротехникине пăсаççĕ. Кувакино районĕнчи Злобино колхозĕнче (колхоз председателĕ Купцов юлташ) кĕрхи çĕртме тума октябрĕн 15-мĕшĕнче кăна тытăннă тата сухаласа та кунта ширлăксем хăварса, 5—7 сантиметр тарăнăшĕ кăна сухаласçĕ. Кувакино МТС-ĕнчи Старостинăпа Липилина трактористкăсем çĕре 12—13 сантиметртан тарăн мар сухалаççĕ. МТС директорĕ Прозоров юлташ, бригадăсене тухса, кĕрхи çĕртме пахалăхне вырăнта, куллен тĕрĕслесе тăрас вырăнне, МТС конторинче ларса ирттерет. Халĕ, тырпулшăн кĕрешни — тăван çĕршывшăн кĕрешни пулса тăракан ответлă тапхăрта, МТС директорĕ хирте, трактор бригадисенче, колхозсенче пулма, трактористсен ĕçне оперативно ертсе пыма тата колхозсене куллен пулăшса тăма тивĕçлĕ.

Колхоз председателĕсен кĕрхи çĕртме тума кирлĕ таран туртăм вăйĕсем уйăрса парас пулать. Çĕр шăнтиччен юлнă кашни минутăпа тухăçлăн усă курса, кĕрхи çĕртме тумалли плана пĕр пăркаланмасăр пурнăça кĕртмелле. Колхоз председателĕ кĕрхи çĕртме тунă çĕр лаптăкне куллен йышăнса тăма тивĕçлĕ. Ĕçе начар тунă пулсан, сухаçăсемпе трактористсене, ĕçкунĕсем çĕнĕрен хушса памасăрах, начар сухаланă участоксене тепĕр хут сухалаттармалла.

Уйрăм райçĕрĕç пайĕсен заведующийĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕç вăрахăн пынипе тата агротехникăна пăснипе çырлахса лараççĕ. Çакăн пек питех те кирлĕ мероприяти çине сӳрĕккĕн пăхакансене тивĕçлипе ответ тыттармалла. Çĕрĕç органĕсем çакна ăнланса илме тивĕçлĕ: партипе правительство пирĕн умма пысăк задача лартнă — колхозсене пирĕн большевикла ертсе пымалла, çапла вара Сталин юлташ фронтпа тăван çĕршыва ялхуçалăх продукчĕсем ытларах та ытларах парса тăма кăтартса панине пурнăça кĕртнĕ çĕрте колхозсене пулăшмалла. Кĕрхи çĕртме тумалли плана ăнăçлăн пурнăça кĕртессишĕн кĕрешни — 1943 çулти çураки кампанине ăнăçлăн ирттерессишĕн кĕрешнин пуçламĕшĕ пулса тăрать.

Республикăн кĕрхи çĕртме планне пурнăça кĕртме пур майсем те çителĕклĕ. Лашасемпе тракторсен ĕç тухăçлăхне çине тăрсах ӳстермелле. Колхозниксене уя иртерех тухмалла тата уйрах апатланмалла тăвас пулать. Çавăн пекех тата лашасене те тӳрех уйра, ĕçленĕ çĕрте тăрантармалла. Конюхсен лашасем валли апат-çимĕçсем вăхăтра илсе пырса тăмалла. Кашни сухаçăна уйрăм участок уйăрса памалла, кашни кун заданисем памалла; çав заданисене сухаçă вăхăтра пурнăça кĕртсе пытăр. Кĕрхи çĕртме тумалли плана пурнăça кĕртессишĕн тата ытти ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн колхозниксен мĕнпур вăйĕсене мобилизацилес шутпа вырăнти партипе совет тата комсомол организацийĕсен массăллă-политикăллă ĕçе куллен туса пырас пулать.

Эпир кĕрхи çĕртме тумалли плана ăнăçлăн пурнăça кĕртме пултаратпăр, ăна çапла тумалла та.

Н. МАЛОВ,

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ.

Пĕлтерӳ

Октябрĕн 22-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Шупашкар Горкомĕн агитпункчĕн лекцисем вуламалли залĕнче (Чувашская ур., 6) пропагандистсемпе агитаторсем валли лекци пулать. Лекци теми:

«Европăри халăхсем гитлерла захватчиксене хирĕç кĕрешни».

Лекцие лектор **Р. С. ДАВТЯН** юлташ вулать.

ВКП(б) Горкомĕ.

Ответлă редакторăн
заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ЗАНЯТИЯ В ЭЛЕКТРОТЕХНИЧЕСКОМ ТЕХНИКУМЕ начались 1-го октября.
Все студенты, неявившиеся на занятия без уважительных причин до 20 го октября, будут исключены.
Открыт прием заявлений в дополнительные группы I-го и II-го курсов.
Заявления принимаются в канцелярии (ул. Ярославская, 51, школа №—4).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1393 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.